Чебоксарская Б. Гор. Горсого
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ҪЕНТЕБЕРЬ 14 ИУНКУН 212(5025) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнай Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакцийăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йăлăхçăлăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йăлкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Кĕрхи çĕртме хăвăртлăхĕсене вăйлатмала

Пайан епĕр Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Кĕрхи çĕртме тăвасси мĕнле-пыни çинчен" йышăннă постановленине пичетлесе каларатпăр. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕç республикăра пачах сителикĕр пыраттăр тесе палăртса хăварчĕ. Унăран районсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пуçланманпа перех темеле. Сентĕврăрри, Трак, Куславкка районесенче кĕрхи çĕртме планне виçшер процент çеç „тултарнă". Ытти районсенче те кĕрхи çĕртме тăвасси йăпах пыраттăр. Çак районсенче кĕрхи çĕртме-вăйла тырпул никĕсĕ пулса тăвине йăланса илмен пулмала. Вĕсем кĕрхи çĕртмене мĕн чухлĕ иртерех туса хăварнă, çавăн чухлĕ çитес çул вăйлăрах тырпул туса илме кирлĕ условисенчен пĕрне хатĕрлени пулласа манаççĕ.

Кĕрхи çĕртме тырпул тухăçне мĕн пек ӳстернине хăмăр республикăри колхозсен опычĕсем те лайăх кăтартса паракçĕ. Вăрнар районĕнчи Колҫовкă колхозĕ тăрăн сухаласа кĕрхи çĕртме тунă вырăнта иртнĕ çулта кветкартан 40 центнĕр çурхи тулă туса илнĕ. Çавăнпа йунăшар кĕрхи çĕртме туман колхозенче 7—8 центнĕр çеç пуçтарса илнĕ. Куславкка районенчи Шăнчăри колхозра кĕрхи çĕртмене пысăк пахалăхпа туса хăварнă участкăра гектартан 59 центнер таран урпа туса илнĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, кĕрхи çĕртмене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле. Вăхăт нумай йулман. Çавăнпа та çак кунсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе питĕ пысăк тимлĕхпе тытăнса, ăна кĕске вăхăтра пĕтересси—пĕтĕм партипе совет, уйрăмах, çĕрĕç органĕсен — райĕçĕç пайĕсен, МТС-сен, йăлсоветсемпе колхозсен чи хĕрлĕ ĕçĕ пулмала.

МТС-сен, ăван çаннăй çĕрте ĕçлекен трактăрсемсĕр пуçне, ытти пур трактăрсене те кĕрхи çĕртме ĕçне кӳлĕтермелле. Анчах пайăнхи ĕçсем МТС-сем кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшне хăйсем умĕнче тăраканн задачсене йăланса илменни çинчен каласçĕ. Ишлей, Йĕтерне, Пăрачкăв, Патăрйел МТС-сем кĕрхи çĕртме планне 3—5 процент кăна тултарнă. МТС трактăрĕсем кĕрхи çĕртмере хăйсен планне тултарса пыманни, тепĕр йĕнчен, хăшĕпĕр çĕрте колхоз правленисемпе вĕсен председательĕсем трактăриссене ĕçлеме кирлĕ пек условисем туса паманнинчен килет. Çакна пытарса тăма çук. Акă, Çĕрпӳ районĕнчи „Кӳҫмет" колхозра, кĕрхи çĕртме тума пынă трактăр вăрлăн колхоз председательĕ колхозниксене йури шыв турттарса пыма чарнине, трактăрăн урăх колхоза каймала пулнă. Çавăн пек кĕрхи çĕртме сухине трактăрсемпе тутарассине хирĕленисем Çĕрпӳ районĕнчи Йăнсакасси колхозĕнче пулнă. Уйрăм колхозсенче çакăн пек машина хирĕçле шухăшсем пурри—тăшмансен сăтăрла ĕçĕсĕн йулашкисене пĕтересси çаплах çителĕкĕр пыни çинчен калать. Машинпа ĕçлесспне хирĕçле шухăшсене пĕтерсе кĕрхи çĕртмере трактăрсемпе туллин уса курмала тавас пулать. Колхозсенче трактăрсемпе трактăриссене ĕçлеме пур условисене те туса памала.

Кĕрхи çĕртмере уйрăмах ĕçĕн пахалăхĕ пысăк вырăнта тăмала. Агротехникă кăтартăвĕсене пахăнса ĕçлемелле. Кĕрхи çĕртме тумали уйă хатĕрленĕ удобренисене пĕтĕм-пех кăлармала. Кĕрхи çĕртме çĕрĕн сухаламали сийне тарăнлатмали чи лайăх вăхăт пулса тăрать. Сăвăн па та ĕнтĕ кĕрхи çĕртмене 20—22 сантиметртан кайа мар, çĕрулми, йĕтĕн тата тымар çимĕсем лартмали участкăсене 24—25 сантиметртан кайа мар сухаламала.

Трактăрпа сухалана кашни участкана колхоз бригадирĕн трактăр бригадирĕнчен акт тарăх йышăнса илмеле. Иртнĕ çулсенчи практикăра çĕртме пахалăхне кирлĕ условисене пăхăнмасăр тунисем пулнă (шăйрак, ăшăх сухалани, т. ыт. те). Çакăн пек чухне колхоз правлени ĕçе тепĕр хут тытарма пултарать. Ку тĕлĕшпе МТС пе колхоз правлени хушшинче тунă договăра икĕ ĕнченех те сирĕппĕн пăхăнни пулмала.

Кĕрхи çĕртме сухин пахалăхне райĕçĕç пайĕсемпе МТС агрономĕсен те тăтăшах контроль туса тăмала. Ку ĕç районсемпе участкăсенчи агрономсен куленчи ĕçĕ пулмала.

Кĕрхи çĕртме сухине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртересспшĕн пур районсенче те, колхозсенче те сониалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса ĕлмала. Кĕрхи çĕртме ĕçĕнче малта пыракансен опычĕсене кайа йулакан участкăсене кусăрмала.

Кĕрхи çĕртме хăвăртлăхĕсене вăйлатса, ăна октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтермеле тунине пĕрлех,йалхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене те ăнăçлăн вĕçлесе тупăшсене ĕçкуйĕсем тăрăх вăхăтра вăлеçмелле тавас пулать. Халĕ уйрăмах—аван çапас, государствăна тырă тăратас, кивçен илнĕ тырпулсене тӳлесе татас, МТС-сене натурплатă тырри парас ĕçсене хăвăрттăлтамала. Çак ĕçсене тунине йăлхуçалăхенчи кĕрхи ĕçсене кайа йулса пынине тытăкланах пĕтермеле, ситес çулти вăйла тырпулшăн кĕрешĕве халех пуçарса йамала. Çак залачсене пурнăçа кĕртме партипе совет организацисен пĕтĕм колхозниксене, йединоличниксене мобилизацилемелле.

ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне вĕренеççĕ

КИЙĔВ, çентабĕрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Украинăри парторганизацисем ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне вĕренме пуçланă.

Кийĕври пăравуссемпе вакунсем йусакан савăтра парти тата комсомол шкулĕсен ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕн пĕрремĕш сыпăкне вĕренмели заңатисене слушăтĕлсем 100 процеңчĕпех пынă. Савăтри партком ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕпе мĕн пур рабочисене тата служăщисене паллаштарма чи лайăх пропагандисемпе агитатăрсенчен 25 сын уйăрнă.

Украинăри Коммуниссен (болъшевиксен) Партини Кийĕври мĕнпур райкомĕсем пуçламĕш парторганизаци секретарĕсен тата пропагăндиссен канашлăвĕсене иртернĕ. Ĕнер Украинăри Коммуниссен (болъшевиксен) Партини Кийев хули комитечĕ парти райкомĕсен кулътурапа пропагандă пайĕсен пуçлахĕсемпе инструктăрĕсен, парти кăбинечĕсен пуçлахĕсен, парти историне вĕрентекен чи лайăх пропагандис-преподавателсен пысăк ашшĕ-амăшĕсем патне васкавла çыру çырат. Ашшĕ çыру илнĕ хыççан, хайĕн Михайловск районĕнчи „Красный Восток" колхозран çирĕплетсе хăйсен çыравĕсене çырнă.

Партире тăман активисткăсем партине кĕреççĕ

ХАРЬКĂВ, çентабĕрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Партире тăман чи лайăх активисткăсем, практикăлă ĕçре тĕрĕслеппĕскерсем партине кĕреççĕ. 1938 çулта сакăр уйăх хушшинче Харькăв хулинчи Ленински районĕнчи партин пуçламăш организацисем парти членне тата кандидата 206 хĕрарăма илнĕ. Вĕсем хушшинче—Украинă СС Республикăн Верховнăй Совет депутачĕ Тиҫьяков йăнăçпе тăракан çĕвĕ-хапăракенчи палла стахановкă Ременнайа йулташ, „Октябрь" хапăркри работницă Алферăва йулташ, Тиҫьяков йăнăçпе тăракан хапăркри комсомолка-работницăсем Ольховик тата Овçанникăва, протез савăтĕнчи пропагандист Ахарина йулташ тата ыт. те.

Пĕр кунта 50 нормă

Комсомолец Матлаб Шахпайалангăван чаплă рекорчĕ

БАКУ, çентабепен 12-мĕш. (ТАСС). Имишлински районĕнчи колхозсенчи стахановецсем çĕр мамăкĕ пухнă çĕрте калама çук чаплă рекордсем тăвaççĕ. Пысăк тухăçлă çĕрмамăк туса илекен Теҫьман йăнăçпе тăракан колхозăн звеньевойĕ комсомолец Матлаб Шахпайалангăн, вăлпа ĕçлесе, 1 611 килограм çĕр мамăкĕ пухнă, çапла вара вăл 50 нормăна йăхăн тултарнă. Çакă вăл темиçе кун кайарах çав районри паллă стахановец Агаджан Абийĕв тунă рекордран тата 531 килограм иртерни пулать.

Рабочи кĕпине тăхăннă шпион

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇРИ ЧИКĔ. Ирхине ирех погранични кспе—Берестовскине Кожух йулташсем хурала тухса кайнă. Кожух йулташ чикĕ ĕнчи хăвасем хушшинчен рабочи кĕпине тăхăнса сын тухса станцă патне хăйулăн уçса кайнине курнă.

— Есĕр ăçта кайатăр?—ыйтнă урăн погранични кспе.

— Станцăна васкатăп, ĕçе кайă йулса çитесрен хăратăп,—шанчăклăн ответленĕ леше.

— Документсене кăтартăр-ха?

Паллă мар сын кăсйерен совет паспăрчĕ, ĕçленĕ çĕртен панă справка тата пограничнăй зонăна кĕмели пропуск лăпкăн кăларса кăтартнă. Пур документсем те унăн йĕркелĕ пулнă.

— Так, есĕр йăрăр мана, йулташсем,—тенĕ вăл пограничниксене. —Ĕçе кайа йулма пултаратăп.

— А есĕр ăçтан?—ыйтнă Берестовскийăн йулташ, уптава сиссе.

Паллă марскер поçолкă йĕнне аллипе кăтартнă. Çав вăхăтра ун рабочи кĕпи çеннинчен шурă кĕпе манжечĕ çинче хăкла йышши запăнка курăнса кайнă. Çакă вăл пограничниксене иккелентернĕ. Вĕсем йăнăшман. Погранични кспе тытнă сын пирĕпне йунашар пĕр государствăн шпионĕ пулнă.

(ТАСС).

Савăнăç тата хисеп

ВĔРОШИЛĂВ (Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ), çентабĕрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Ĕççыннисем Рабочисемпе Хресченсен пархатарлă Хĕрлĕ Çарне хăйсен ывăлĕсене пите пысăк савăнăçпа йăраççĕ.

Паравуссем йусакан савăтри токăре Гончар йулташа килте ĕçлекенсем çук пирки ҫĕнтă панă. Анчах, Хĕрлĕ Çарти службă—унăн тăхăнăнни ĕмĕчĕ. Призыв комиссиончен хăйне çара илме вăл хытă тилмĕрсе ыйтнă пулин те, призыв комиссийĕ хăйĕн шухăшне улăштарман. Гончар йулташ хăйĕн ашшĕ-амăшĕсем патне васкавла çыру çырат. Ашшĕ çыру илнĕ хыççан, хайĕн Михайловск районĕнчи „Красный Восток" колхозран çирĕплетсе хăйсен çыравĕсене çырнă.

Хĕрлĕ Çара пултарулă çамрăксем кайаççĕ

Канаш районĕнче призыв комиссийĕ ĕçлеме тытăнаранпа вунпĕр кун иртрĕ. Çак хушăра нумай çамрăксем хăмăрăн тăван Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç.

Призывниксем призыва праçник тумĕеемпе, тулли кăмăлпа хавасланса пыраççĕ. Пурте Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулма тивĕç илесшĕн вĕсем. Çентабĕрĕн 10-мĕшĕнче призыва комсомолец Пушков Петр Иванăвич кĕчĕ. Вăл Канаш-Шупашкар чукунçул строительствинче бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади нормăна йăланах 150—200 процент тултарса пырать. Призыв комиссийĕпе Пушкова Хĕрлĕ Çара илчĕ.

Граннник комсомолĕпа та комисси Хĕрлĕ Çара илчĕ. Вăл çĕвĕ çĕлекен „Швейник" ертелĕн председательĕлĕ пулса ĕçлет. Граннник йĕртсе пырскан ертел çур çулхи плана 104 процент тултарнă, август уйăхĕнчи плана 122 процент пурнăçланă. Граннник йулташ хăйне Хĕрлĕ Çара илнĕшĕн калама çук хаваслăнăç.

Чылай призывниксем пăнă ҫĕнтăсене йышăнмасăр хайсене Хĕрлĕ Çара илме ыйтаççĕ. Акă Асхва йăлĕнчи 1917 çулта çуралнă Платонăв Михаила ҫĕнтă панă. Вăл ҫĕнтăпа килĕшмесĕр çăвăртах призыв комиссине хăйне Хĕрлĕ Çара илме ыйтаççĕ. Çавăнпа вăл: „Ĕнĕ трактăр рулĕ çинчен танк рулĕ çине куçса ларма тивĕç илтĕм",—терĕ.

Призыв калама çук пысăк хаваслăхпа пулса пырать. Çамрăксем пĕрин хыççăн тепри призыва кĕрсе, хăйсен ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсене пурнăçлаççĕ.

С. Филиппăв.

Призывниксем комсомола кĕреççĕ

Хĕрлĕ Çар ретне илнисем тата призыва кĕмелли çамрăксем комсомола кĕреççĕ. Призыв пуçланнăранпа Шахаçан районĕнче 10 çын, Ишлейре—2 çын, Йĕпреçре—12 çын комсомола кĕнĕ. Çавăн пекех Ишлей районĕнчи призывниксенчен 2 комсомолец парти кандидатне кĕчĕç.

Призывниксем призыв пуçланичен тата призыва кĕрсе тухсан та колхозсенче стахановăла йухăма сарса пыраççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи „Комбайн" колхоз бригадирĕ Фомин Йăкăв кăçал призыва кĕчĕ. Хай призыва кĕричен государствăна тырă парса тăтнă. Унăн бригади ытти бригадăсенчен 3 кун малтан ыраш акса пĕтернĕ. Тырпула Фомин бригади нимĕн тăкăлмасăр пуçтарса кĕнĕ. Фомина Хĕрлĕ Çара илнĕ. Хăлĕ унăн бригадинчи колхозниксем кĕрхи ĕçсене ăнăçла вĕçлеме тăраççĕ.

Цыпленкăв.

Чехословакири фашисăма хирĕçле демонстрацисем

Генлейнăвĕсен вăйланса пыракен провокацийĕсене хирĕç ответлесе, çентаберĕн 11-мĕшĕнче пĕтĕм Чехословаки тăрăх çынсем фашисăма хирĕçле демонстрацисем пуласа иртнĕ.

Пуринчен вăйлă демонстрацин Пиҫьсэн хулинче пулнă. Унти демонстрацине 50 пин çын хутшăннă. Митингра чех социал-демократĕсен партии председательĕ Гампл сăмах тухса калана, хăйĕн сăмахĕнче вăл правительствăн йулашки сенĕвĕсем—„уступкăсем чикки; малашне епĕр пĕр утăм та кайăла чакмăпăр!" тенĕ.

Глучин хулинчи демонстрацире 25 пин çын, Главăра — 20 пин, Чешске Будейовицре — 15 пин, Каничре—15 пин, Мостра—15 пин, Духовра—10 пин, Подмоклире—5 пин çын пулнă т. ыт. Демонстрацисене мĕн пур антифашисла партисем хутшăнма пулнă. Пур митингсенче те халăх массисем республикăн никама ыхăнмаллăхне, унăн нĕрлĕхне тата унăн демократилĕ стройне хӳтлеме хатĕр тăнине кăтартакан резолюцисем йышăнăнă.

(ТАСС).

Мексикăра вăрçа хирĕçле конгрес уçăлнă

ÑЙУ-ЙОРК, çентабĕрĕн 12 мĕш. (ТАСС). Мексикăра вăрçа хирĕçле пĕтĕм тĕнчери конгрес уçăлнă. Конгреса уçнă чух калана çамахĕнче Мексикă президенчĕ Кардĕнăс вăрçа чĕртекенсене хирĕç пĕрлешӳлĕ мерăсем йышăнма чĕнĕнĕ.

Конгрес уçăлнă майна Мексикă хулинче массалă митинг пулса иртнĕ, вăл митингра 50 пин çын ытла пулнă.

„Демократин йăланах тăшмансем

П. И. Пумпур йулташ Тракра

ТРАК. (Телефон тĕрĕх) Çентабĕрĕн 12-мĕшĕнче Тракра СССР Сойуçĕн Верховнăй Совет депутачĕ Совет Сойуçĕн Геройĕ Пумпур тата СССР Сойуçĕн Верховнăй Совет депутачĕ П. Д. Красков йулташсем пулчĕç. Район центрĕнче митинг пулса иртрĕ. Митингра 1200 çын пулчĕ.

Пумпур йулташ Хĕрлĕ Çарпа флотăн пысăк ӳсĕмĕсем çинчен, вĕсем тăван çыршыва çирĕп сыхласа тăни çинчен каласа пачĕ. Красков йулташ СССР Сойуçĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çĕççи ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Г. Закамский.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Чехословакири гитлĕрăвĕçсем çĕнĕ провокацисем тунă

Иулашки икĕ кун хушшинче Гитлĕран Чехословакири агĕнчĕсем—генлейнăвĕçсем провокацилĕ майпа, çĕнĕрен нумай „инцидентсем" туса иртернĕ. Генлейнăвĕçсемпе полици тата фашисăка хирĕç керешекенсем хушшинче çапăçу пулнă. Фашиссем Карлова Вара хулинче куntан та пысăк выступлени тунă. Ута хула сывăлăнчи полицейски участкин çуртне пĕр генлейнăвĕç пынă та, ман çине антифашист тапăнчĕ, тесе калана. Дежурнăй полицейски вăл каласа панине лайăх тĕрĕслесе пĕлме тесе, „инкек курна çынна" пуçланăна йамала тунă.

Полицейски участкин кил картине темиçе çĕр генлейнăвĕç пухăнса тăнă, вĕсем урамра пыракан машинăна чарнă та, ун çине „хĕнесе пĕтерĕе" генлейнăвĕçа лартнă пек туса, шофĕра туртса антарнă. „Тĕп пултăр чехсен полицийĕе" тесе кăшкăрса полицейски участкин çуртĕ патне мăтканă, çурт ăшне кĕме хăтланса чӳрече-сене йăлтах ватса тăкнă.

Генлейнăвĕçсемне вĕсене чарма пынă полицейски отрйачĕ хушшине сапăçу пулнă. Сакăр полицейски аманнă.

Çак тытăçса çапăçни вăл генлейнăвĕçсене пĕтĕм хулинех выступлени тумали çинчен çитнĕ пулнă. Фашисла бандинтсем фашисăма хирĕç керешекен чĕкеемне инкĕç-сем çине темиçе хуттех те таванă. Çавăн пек тапăнусем вăхăтра уятă çын аманнă. Генлейнăвĕçсем финкăсемпе, резинă чукăçăсемпе тата штыксемпе усă курнă.

Либерец хулинче генлейнăвĕçсем хăйсен пуçлăхĕ—Генлейн килет тенĕ сăмах сарнă та, ăна кĕтсе илетпĕр тесе демонстрацин тунă Генлейнăвĕçсем хăйсене пит ирĕçĕрĕн тытқалана, вĕсем фашисла лозунгсем кăшкăрнă, провокацилĕ майпа робочисем ушкăнĕне тытăçу кăларса йама хăтланнă. Анчах та полицейски отрйачĕ провокатăрсене ашкăнма чарса лартнă. Çакăн хыççăн генлейнăвĕçсен ушкăнĕ полицейски участкине çĕмĕрме хăтланнă. Темиçе полицейскине амантнă.

Хĕбе хулинче плошчĕре мотоциклисем чупăвĕ пулмала пулнă. Ута икĕ пине йăлăн генлейнăвĕçсен штурмовикĕсем пырса çитнĕ. Провокацилĕ майсемпе çапăçу кăларса йăнă. Хирĕçирĕç тытăçса çапăçнă çĕрте 25 çын аманнă, вĕсенчен 13-шĕ полицейскисем.

Кун пек провокацисене генлейнăвĕçсем Чехословакири ытти хулисенче те тунă.

Çентабĕрĕн 11-мĕшĕнче, лорд Ренсимен канакан пĕр помешчик дворенĕ патне темиçе пин генлейнăвец пынă. Вĕсем „Германи çумне пĕрлештерме ыйтăпăр" текен лозунгсем кăшкăрнă, гитлĕрла гимнсем йурлавă. Лорд Ренсимен ăна сăламланăшăн „хĕнесе" тав тунă, „Судет-немĕç пробленине татса парас тĕлĕшне" мĕн тумалисене пурне те тума пулнă.

Чехословаки халăхĕн йышăвлăхсемсем йулашки кунсенче тунă „инцидентсем" пирки калама çук хытă тарăхнăçĕ, вĕсем правительствăран Судет-облăçĕнче вĕрт-келĕх кӳме ыйтаççĕ.

(ТАСС).

Берлинри компăс кăтартнă вĕрпе. М. Отăрăн ӳкерчĕкĕ („Пресскляйе")

Германи Силезинче шыв тулса кайнă

Германири Силезинче темиçе ерне хушши татти-сыпăнăр сунă çамăрсем халăха тата пĕтĕм промышленноçа питĕ пысăк тăвакăсем кӳнĕ. Пуринчен ытла Нейсе хули нумай тăвак кӳрнă, унта шыв икĕ метр таран хăпарнă. Айăлти хутри 300 хваттере тата 7 пин вӳрене мачча тараначĕ шыв илнĕ. 450 хваттере пĕтĕмпех пĕтерĕç. Çурт-пĕрсене пĕтĕмпех пулнă тăвакăсем пĕр мĕйăчи маркăпан иртеççĕ. Государствăна савăнăçсенче те тăвакăсем пысăк. Газла, электричествăна, канализаци тата ыт. предприятисем шыв илнине пулнă хăйсен тăвакисене пĕр мĕйăчи маркăпа тăвалаççĕ.

(ТАСС).

Германи урса кайсах вăрçа хатĕрленет

Германин „Берлинер тагеблатт" йăтăлă хаçачĕ çапла çырат: гитлĕрвĕçсене йĕртсе пыракансем хушшинче Судет ыйтăнăпе „сăйăнчех тата халех татса пама кирлĕ, тесе шутлаççĕ".

Вена хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, йулашки кунсенче унта йăвăр артиллери тата моторизацинленĕ çĕрсен пысăк вăйĕсем çитнĕ. Пĕтĕм Австрире васкасах укрепленисем тăваççĕ. Хăш-пĕр районсенче „Чехословакине хирĕç наступлени тумала" текен лозунгпа маневрсем пулса иртнĕ. Австрири йышăнăлăх хăраса ӳкнĕ.

Англи хаçачĕсен Австрипе Чехословаки хушшинчи чикĕне Германи çăрĕсене илсе пырса тултарни çинчен пĕлтереççĕ. „Манчестр стандард" хаçат çырнă тăрăх, чикĕ хĕррипчен шаларах 50 миль çĕр сарлакăшĕнче Германи çăрĕсем 200 пин салтак шутланаççĕ.

Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, генлейнăвĕçсен партийĕ хăйсен мĕн пур членĕсене „çапăçма хатĕр тăмали çинчен" пĕлтернĕ. Генлейнăвĕçсене тата вĕсем штурмала отрйачĕсене чăнлăхах мобилизацилеççĕ. Ситес кунсенче генлейнăвĕçсем провокацилĕ демонстрацисем тăвассине кĕтеççĕ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партин районсенчи организацисен пухăвĕсем

„Темиçе хут та калаçнă, анчах темшĕн ĕçне „туман"

Докладчик та, тухса калакансем те ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралăмартри, пленумĕн решенисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен каламарĕç. Сăтарла ĕçсен йăлашкисене петĕрес шăтăва тăшмансене малашне те тăрă шыв çине каларса пырас шăтăран уйрăман - илни— „епĕр тăшмансене пĕтĕмĕшпех тĕп туна, сăвăнна вĕсем çинчен пайан-лăха ларламасан та йăрат" текен сĕрек шухăш пулма пултарни çинчен калаç.

Государствăй дисциплинине аркатас, партилĕ тата государствăлă обязанăнăçсем çине чунсăран пăхассине сарас, вăл обязанăнăçсене пурнăçлассине аркатас тесе, тăшмансем сахал мар тăрăшнине Маръутин йăлташ хăйĕн докладĕнче примерсемне çирĕплетсе пачĕ. Хăшпĕр колхозсенче устава пасса ĕлкĕççĕ, колхоз руководителĕсенчен пĕрисем машинăсене усă курассине хирĕç тарăççĕ, чылай колхозсенче лаша хатĕрĕсемне упрасене салатса пĕтерçĕç („Труд" колхозра 25 лаша вăльăн пĕр урапа кăна йулнă), колхоз лашисене килĕрен валĕçсе парса, дисциплинăна, организацилĕхе, колхоз çирĕплĕхне аркатаçĕç. Конпер тата Йанту колхозсен председателĕсем пăсăлса кайса, ерни ернине ĕçкĕре сӳренĕ, колхозри дисциплинăна аркатма хăтланă. Çаксем пурте тăшмансем вл хумаçăр пулман.

— Вĕсем çинчен епĕр темиçе хут та калаçна, анчах ку тарнчченех темĕнпинех мерăсем йышăнман, тивĕçлине кĕрешни пулман,—тет докладчик. Вăл кунта „хăмăр либерализăм" çинчен чăрăнса тăрать, çапах та райкомăн тата уйрăм коммунисен ĕçне çителĕксĕр критиклет.

Докладчик та, тухса калакансем те райсĕрĕç пайĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен, вăл сăтарла ĕçсен йăлашкисене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлени çинчен чылайрах калаçрĕç. Çĕрĕç пайĕ кашни колхозра мĕн чухлĕ çĕр пурринне те тĕрĕссĕн кăтартса пама пултараймасть, вылăх-черĕск чиресемпе кĕрешме мар, вĕсем мĕнле чирпе чирленине те йăнланса илме пултараймасть, малашне те тăрă шыв çине каларса пырас шăтăран уйрăман - илни— „епĕр тăшмансене пĕтĕмĕшпех тĕп туна, сăвăнна вĕсем çинчен пайан-лăха ларламасан та йăрат" текен сĕрек шухăш пулма пултарни çинчен калаç.

Государствăй дисциплинине аркатас, партилĕ тата государствăлă обязанăнăçсене çине чунсăран пăхассине сарас, вăл обязанăнăçсене пурнăçлассине аркатас тесе, тăшмансем сахал мар тăрăшнине Маръутин йăлташ хăйĕн докладĕнче примерсемне çирĕплетсе пачĕ. Хăшпĕр колхозсенче устава пасса ĕлкĕççĕ, колхоз руководителĕсенчен пĕрисем машинăсене усă курассине хирĕç тарăççĕ, чылай колхозсенче лаша хатĕрĕсемне упрасене салатса пĕтерçĕç („Труд" колхозра 25 лаша вăльăн пĕр урапа кăна йулнă), колхоз лашисене килĕрен валĕçсе парса, дисциплинăна, организацилĕхе, колхоз çирĕплĕхне аркатаçĕç. Конпер тата Йанту колхозсен председателĕсем пăсăлса кайса, ерни ернине ĕçкĕре сӳренĕ, колхозри дисциплинăна аркатма хăтланă. Çаксем пурте тăшмансем вл хумаçăр пулман.

— Вĕсем çинчен епĕр темиçе хут та калаçна, анчах ку тарнчченех темĕнпинех мерăсем йышăнман, тивĕçлине кĕрешни пулман,—тет докладчик. Вăл кунта „хăмăр либерализăм" çинчен чăрăнса тăрать, çапах та райкомăн тата уйрăм коммунисен ĕçне çителĕксĕр критиклет.

Докладчик та, тухса калакансем те райсĕрĕç пайĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен, вăл сăтарла ĕçсен йăлашкисене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлени çинчен чылайрах калаçрĕç. Çĕрĕç пайĕ кашни колхозра мĕн чухлĕ çĕр пурринне те тĕрĕссĕн кăтартса пама пултараймасть, вылăх-черĕск чиресемпе кĕрешме мар, вĕсем мĕнле чирпе чирленине те йăнланса илме пултараймасть, вылăхсем, вилсен, вĕсене касса пăхмасăрах, район центрĕнчех, актăсем сырса пама хатĕр тăрать, пусусаврăнăшне, вăрлăх хуçалăхне йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлемест т. ыт. те. Пренире тухса каласа, çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Оçикăн йăлташ вăл хăйне хушнă ĕçе тивĕçлине туса пыни вăй ситерейес çуккине кăтартса пачĕ.

Шупашкар районĕнчи МТС республикăри чи начар ĕçлекен МТСсен шутĕнче тăрать. МТС директорĕ Воробйов йăлташ çакна кадрсем сигменнине ăнлантарса пама пăхрĕ. Кадрсем сигменни директăран политикăпа ĕнĕпне ĕçлекен заместителĕ Шчеголев йăлташ начар ĕçленинчен тата комсомол райкомĕ начар пулăшнинчен килет иккен. Воробйов йăлташ ку ĕçре айăпла мар. Çапла вара, МТС-че ответлăха пĕр-пĕрин çине йăвантарас йăла пĕтмен-ха.

Пухура халăх хуçалăхĕн пур отраслисем çинчен те чăрăнса тăчĕç. Суту-илу тĕлĕшпе ака мен курăнать: ку ĕçре ĕçлекен коммунисем таварçаврăнăш планне тултаркалаçа пынине лăпланса ларнă. Анчах плансене пĕчĕклетсе тунине, районта суту-илу ĕçĕ халĕ те çителексĕр пынине пĕтĕмĕшпех ăнланса илеймен пулас-ха.

Маљутин йăлташ чылай ĕçсем пирки: ку ĕç—„важнее всех", ку ĕç—„выше всех", ку ĕçе ытти ĕçсене „ущерб" тусах пурнăçламалла, тет. Ыçсем çине çакан пек пăхнине кирлĕ таранах тĕрĕс тесе шутлама çук. Пайан ку ĕç „кирлĕрех" тесе, теприне манни, ытти ĕçсене туса тума черерет кĕтни пулмала-мар. Вăл мелетпе ĕçлесспне начар ĕçлени çинчен чылайрах калаçнă.

Сăвăнна та чукунçул тума кайатпăр пулсан, укçа-тенкĕ пухассине те „ущерб" тумала мар, маннала мар. Сăмахран каласан, укçа-тенкĕ пухасси çине райком ку тарнчченех сителĕксĕр сăвăранса пăхна, нумайрах йалхуçалăх тĕлĕшпе ĕçленĕ пулмала. Унсăран Маљутин йăлташ „епĕ укçа-тенкĕ пухасси начар пынин салтавĕ мĕнпе тăнине, мĕншĕн плана тултарайманнине, тӳррипех калас пулсан, пĕлместĕп" тесе каламĕччĕ.

Пренире Морозăв, Никитин, Галинăв, Васильĕв, Петровăй, Алексеĕв, Александрăв, Крылов, Федăрав, Йегорăв йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем уярăм коммунисем тата районри организацисем сăтăрла ĕçсен йăлашкисене пĕтерессишĕн начар кĕрешсе пынине кăтартса пачĕç. Анчах калас пулаť, райсутĕç пайĕнче ĕçлекен Антонăв тата Васильĕв йăлташсем хăйсен çитменлĕхĕсен салтавне тĕрĕс мар ăнланнă. Вĕсем çинĕ вĕренӳ çулне начар хатĕрленни „вĕсене моойилизацилесе" пĕр виç кунлăха йала командировкăна йăнинчен килнĕ иккен!

Пуху хăйĕн резолюцинче отчотпа сӳлăв пухăве иртнĕренне коммуниссен сыхăлăхĕ чылайăх ӳсниме, производствăла çĕкленӳ вăйланнине, район чыдăй ĕçсенче пысăк ӳсӳмсем тунине палăртрĕ.

Пухура пулнă пĕр пысăк çитменлĕх вăл—ытларах хуçалăх ыйтăвĕсем çинчен калаçни, партилĕпропагандăлă ĕçри сăтăрла ĕçсен йăлашкисене пĕтересси çинчен манса хăварни.

ПСК(б)П Шупашкар райкомĕн малта пыракан, партипе советвлащсĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешмен колхозниксене партине илес ĕçе, çĕнĕ членсемпне кандидатсем хушмашне ĕçлессине чылайах вăйлатмала.

В. Йăкăвлĕв.

Пухура критикăпа самокритикă сахал пулчĕ

Çĕнтăвĕрĕн 11-мĕшĕнче Ишлей районĕнчи коммунисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура парти членĕсем 40, кандидатсем 37 çын пулчĕç. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йăлашкисене пĕтерес пыни çинчен ПСК(б) Парти райкомĕн секретарĕ Тепейĕв йулташ доклад туса пачĕ. Вăл халăхăн докладĕнче, сӳлăв пухăвĕ иртнĕренне парторганизацин нумай çитĕнӳсем тунине катартаť.

Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йăлашкисене пĕтерес пыни çинчен ПСК(б) Парти райкомĕн секретарĕ Тепейĕв йулташ доклад туса пачĕ. Вăл халăхăн докладĕнче, сӳлăв пухăвĕ иртнĕренне парторганизацин нумай çитĕнӳсем тунине катартаť.

Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йăлашкисене пĕтерес пыни çинчен ПСК(б) Парти райкомĕн секретарĕ Тепейĕв йулташ доклад туса пачĕ. Вăл халăхăн докладĕнче, сӳлăв пухăвĕ иртнĕренне парторганизацин нумай çитĕнӳсем тунине катартаť.

Кĕркри çĕртме тăвасси пит те начар пырать. Плана 9 процент анчах тултарнă. МТС халĕн трактăрĕсене çителĕклĕ организацилемен. Райçĕреçпайĕнче ĕçлекенсем те колхозри лашасене ĕçлетересси çине начар сăвăрăнса пăхаççĕ.

Çак çитменлĕхсем вĕсем Сталин йулташ 1937 çулхи февралăпе март уйăхĕнчи ПСК(б)П Тĕпком пленумĕнче хуçалăх ĕçĕсене парти членĕ массăлă ĕçпе сыхăнтарса вăйлатмала тенине парти райкомĕ çителĕклĕ ăнланманнинчен килеççĕ.

Тепейĕв йулташ хăйĕн докладĕнче нумайтарах хуçалăх ĕçĕсем çинчен каларĕ. 1937 çулти февралăмарт уйăхĕнчи тата 1938 çулти январăр уйăхĕнчи ПСК(б)П Тĕпком пленумĕсен решенисене пурнăçласа пыни çинчен сахалтарах чăрăнса тăчĕ.

Райкомра ĕçлекен Григорйев йулташ калана тăрăх, хăшпĕр коммунисем члел укçине кашни уйăхра тӳлесе пырас вырăнне 3 шер уйăхшăн харăс тӳлеççĕ (Красновпа Краснова). Халăх хушшинчи политикăлă-массăлă ĕç сӳнсе ларнă.

Хăшпĕр колхозенче йалхуçалăх ертелен уставне пăсаççĕ. „Алгаш" тата „Вашук" колхозсенче йалхуçалăх ертелĕн уставĕсене те сухатмаť.

Пренире тухса калама 23 çын сыраннă. Вĕсенчен 16-шĕ калаçрĕç. Пренире калакансем райкомăн çитменлĕхĕсем çинчен сахал чăрăнса тăчĕç. Критикă çителĕклĕ пулмарĕ. Пуринчен ытла йалсенчен пынисем сахал каларĕç.

Парти историне ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăларнă çĕнĕ учебник тăрăх вĕрентес ĕçе йалăх организацилесе кăтартрĕ.

Доклад тăрăх районри парторганизацин пухăвĕ конкретлă решени йышăнса, пур коммунисене те вăл решенине бољшевикла пурнăçлама чĕнчĕ.

Г. Сахалкин.

Хăçатсене пăхса тухни

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарас умĕн

Октябрĕн 29-мĕшĕнче Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарать. Сывлăш çăмăрĕкĕн çак уйăва пысăк хастарлăхпа, пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Социализмăла промышленнăçри тата социализмăла йалхуçалăхĕнчи стахановĕсем комсомол 20 çул тултарнă чаплă уйăва ĕçтăхăлăхне хăпартас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тунине кĕтсе илеççĕ. Шкулсенче вĕренекенсем вĕренӳ пахалăхне ӳстерессишĕн „хорошо" тата „отличнă" паллăсем илессишĕн тăрăшаççĕ. Союзра тăман çамрăксем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕреççĕ. Халĕ комсомол 20 çул тултарнă йатпа кашни çамрăк, кашни комсомолец хăйĕн тăван çĕршывне парне хатĕрлет. Çакăнта совет çамрăксем политикăлă активлăхĕ, вĕсен пĕрлехĕ, социализăм ĕçĕмĕн пĕтĕм вăйăхала хурса кĕресше хатĕр тăни курăнса тарать.

Совет çамрăксен ӳссе пыракан политикăлă пысăк активлăхне тата ытларах вăйлатма, комсомолецсене ĕççăмрăксене хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме пулашас ĕçпе хăçатсен вырăнĕ питĕ пысăк. Халĕ районри хăçатсем нумайĕшĕ Ленинла-Сталинла комсомолăн чаплă уйăвне хатĕрленĕ май, комсомол организацисем, комсомолецсене ĕççăмрăксене уйăва социализăмăн строительствинче мĕнле çитĕнӳсем тунине кĕтсе илнине кăтартаççĕ.

ПСК(б)П Тăвай райкомĕн „Бољшевикла колхозшăн" хăçатĕ 7-мĕ номерте Чутăйри „Хурçа" колхозри комсомолĕц—бригадир Йегор Васильев йулташ уйăва мĕнле хатĕрленни çинчен ака мĕнле çырать: „Йегор Васильев йулташ комсомолăн 20 çулхи уйăвне колхоз ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Васильев-ăш иртнĕ çулсенче кайăвала пынă бригадăна малти рете кăларчĕ. Бригадăра 4 звено, вĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Тырпула вырса пуçтарса кĕртнĕ чухне Агрипина Барабанăвă, Марийа Мулакова, Анна Рыжнова тата ыт. стахановăксем ӳссе çитенчĕç."

Колхозри комсомол организацин комсомолецсем комсомолецсем уйăва йăнене тăван çĕршыва парне пама хатĕрленнине „Бољшевикла колхозшăн" хăçатăн кашни номеренчех куратăн. Тущкилтри „Жерлĕ Çăр" колхозри ĕне ферми пуçлăхĕ, комсомолец Иван Алексейĕв йулташ уйăва хатĕрленнĕ май çĕнтăвĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна ашкакай памали 1938 çулти плана тултарнă, çамрăк пăрусене пăхассине йĕркеленĕ, фермăна примерлă хуçалăх туса хунă.

Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ комсомолăн ĕççăмрăксем умĕнчи авторитечĕ питĕ пысăк. Комсомол комитечĕсем çамрăксем хушшинче йăратса ĕçленĕ çĕрте çамрăксем комсомол ретне хаваслăн кĕреççĕ. „Бољшевикла колхозшăн" хăçат кун пирки ака мĕн çырать:

„Тăрăшăр комсомол организацинче иртнĕ вăхăтра комсомолĕцсем сахал пулни, комсомол комитечĕ унăн секретарĕ Матвейĕв йулташ çамрăксем хушшинче тăрăшса ĕçленине организацири комсомолĕцсен хисепĕ 41 сынна çитнĕ. Халĕ комсомол комитечĕ колхозри çамрăксене комсомол ретне нумайăн хутшăнтарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет".

Çĕнĕрен комсомола илнĕ çамрăксене бољшевикла воспитани парассине вăйлатса, политшкулсемпе кружоксем ĕçĕсем лайăхланни çинчен те хăçат номĕртени-номĕрех çырса пĕлтерет.

Комсомолĕцсемпе çамрăксем уйăва оборонă çĕнне вăйлатнине кĕтсе илеççĕ. Çĕмĕрлери комбинатри урапа цехĕнчи комсомолĕц-стахановăвĕ Йакăв Александрăв йулташ уйăв кунĕ тĕлне ПВХО инструкторăсен курсине „отличнă" вĕренсе тухса, ворошиловла тĕл перекеннене 10 сын хăтĕрлеме пулнă. Техприомшчик Пиченăв йулташ ГТО значокĕсене илме нормă парас ĕçе организацилет. Малалĕв комсомолецĕ та „Ворошиловский стрелок" тата ГТО значокне илме нормă пама пулнă. („Социализмăла ĕç" тата „Бољшевикла колхозшăн" хăçатсем çамрăк патриотсем, 1917—1918 çулта çуралнă çамрăксем. Хĕрлĕ Çар ретне пысăк хаваслăхпа кайăнне, вĕсен сăвăнăçĕсемпе хаваслăхне сутататаççĕ, ăна комсомол уйăвне хатĕрленнессине сыхăнтараççĕ.

Уйăва хатĕрленнĕ кунсенче комсомол пуçлăмĕ организацисен отчочĕсемпе сӳлăвĕсем пулса иртеççĕ. Çак сӳлăвсем комсомолĕцсен сыхăлăхне малала хăпартас, çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне вăйлатас, комсомол документăсене улăштарма хатĕрленес ĕçсене лайăх организацилес, йуçламĕш организацисен ĕçĕсене тĕрекле-летес ĕçенене иртмелех. Анчах епĕр пăхса тухнă икĕ хăçаче те çак ыйтăсене кăларса тăратмаççĕ. Çавăн пекех „Бољшевикла колхозшăн" тата „Социализмăла ĕç" хăçатсем комсомола парти ĕнчен йĕртсе пырас ĕç вырăнĕнче мĕнле тăнине пачах сутатмаççĕ. Çамрăксемпе комсомолĕцсем хушшинче ĕçлесси, çак ĕçе йĕртсе пырасси—партин кашни организацин пысăк задачи пулаť. Хăçатсен хăйсен кулленхи ĕçĕнче çак ыйтăва тĕплен сутатса пымала. Ку ĕçре бољшевикла пичетĕн вырăнĕ питĕ пысăк.

Колхозри строительства

Çĕнĕ Ейпери (Йĕлчăк районĕ) Чăнайĕв йăчĕне тăракан колхоз 200 кубла метр вăрман туйăнчĕ. Колхоз çав йăвăрçан 150 тонна вырăнсăмлăх тыра склачĕ туса лартрĕ. Сысна ферми валăн 150 пуç сысна хупма пысăк вите таварçĕ. Вите техниксем кăтартнă стандартлă формăпа пулаť. Йĕнĕсапаксем пусланса каймăчен строительства ĕçне туса пĕтерес тĕлĕшпе Иван Курманайĕв колхозник бригадирĕн платникĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Г. Васильĕв.

Испани çуначĕсем

„Молодая Гвардия" издательствăн кăларнă „Испани çуначĕсем" йăтлă кĕнекене хăйĕн кашни страницине республикăла Испани авиацийĕн пултарулăхне, унăн ăотчикĕсем геройлă ĕçĕсене кăтартса парать. Куити йĕркелене епĕр çав кĕнекерен илсе кăтартатăпăр.

„Çак кунсенче пирĕн звено вĕсем пилĕк самолăтне хирĕç пулчĕ. Епĕр кайала чăмăрăмăр, атакă тума лайăхрах кĕтес шырăса та тăмарăмăр, вĕсем çине тӳрех сирпĕнтемĕр. Нерăсем кăшăн сирĕпрехи курас терĕмĕр. Вара, фашисем тӳсеймерĕç. Вĕсем çурмăсăр çине айăлала чăмса анчĕç, унтан сапаланса кайрĕç. Тĕлĕнмелех, çапăçу пăсăра вĕсем пĕр-пĕрне хута кĕрӳ те, пĕтĕсӳ те нимĕн те çук", —кăна пĕр ăотчик каласа парать.

Ӳсекă сыхăнче фашисем Моите Арагон ăтлă тăва тытса тăнă. Аљфансо Рейес командир çав ту çине бомбăсем пăрăзма приказ панă. Ту çинче çирĕм тăватă самолăт вĕсде тăнă. Унтан вĕсем хăйсен лагерĕнче сĕнĕрен бомбăсем илме кайнă. Сав çирĕм тăватă самолăт ту çине тепĕр хут пырсан, ташшансем тӳссе тăраймăн, шурă йăлана кăларса ывăтнă.

Италин авиацийĕ вĕсекен сакăр машини тăвата пин-метр сĕлĕшĕче вĕçнĕ. Вĕсемне республикăн тăвата истребительĕ хушшинче минут иртнĕсерен пĕчĕкленсе пынă. Анчах пăлханçăсем кĕнеранпе тăракан вырăн çине бомбăсем пăрахасси республикăсĕрсен тапăлса пырас пĕтĕмĕшпе планĕнче пиллĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă, çавăнпа та республикăна ăотчикĕсене хирĕç сакăр самолăт çеç мар, ташшисен пулăташĕ-сыпăк самолăтне вĕçсе пынă пулсан та, вĕсем кайăка чăкас çукчĕ.

Республикăн тăвата истребителĕ, фашисем çăмăрĕкĕн бомбардировщикĕсенпе пăрса, вĕсене заданийĕ пурнăçлама май парас тесе, çапăçу пуçласа ăанă. Çав хĕрӳ çапăçура фашисем тăвата машинине персе антарнă, йулăшки тăвăттăшĕ чылай арканса кайăла тарнă. Фашисен ăотчикĕсем республикăн бомбардировщикĕсене тин кирлĕ заданийĕ пурнăçлас ĕçре чăрмав кӳме пултарайман.

Республикăн „Чато" (курносăй) ăатлă вунникĕ самолăтĕ тăшмансен сирĕм çинĕ „фиатне" хĕрес пулнă. Республикăнĕçсен командирĕ Хосе Мирăнăо çапăçу пуçлама шутланă. Республикăнĕçсем чи пирвай мăй йĕнчен тапăнă, вара „фиатсем", çакна кĕтмеççĕскерсем, çапăласа кайнă. Вĕсен хура флагманне республикăнĕçсем чи малтан пере антарнă. Çапăçу республикăнĕçсен сĕнтĕрине вĕçленнĕ. Фашисла машинăсĕн пĕр пайне персе антарнă, сывă йăлинсем кайăла тарнă.

Республикăнĕçсен çамрăк тата вĕрĕмлĕ ăотчикĕсен пĕр пĕчĕк отрăвĕ çине марроканĕçсем урса кайсăн- тапăннă. Отрăад кайала чăкма та хатĕр пулнă. Командир çакна сиссе аэродрома пелтерĕ.

— Авиаци кирлĕ. Хастарлăха ӳстерме кирлĕ.

Пилĕк самолăт вĕçсе тухнă. Вĕсем республикăнĕçсен окопĕсем тăрăх листовкăсем пăрахса вĕçнĕ. Хĕлăх фрончĕ республикăнĕçсене тӳсĕмле пулма чĕнĕ. Бойецсем сывлăшпи листовкăсене тытса вĕсене вескесĕх вуланă. Самолăтсем марроканĕçсен отрăадне штурмласа, çăтăсн вĕсем çине тăхлан çăмăрĕ çутарнă. Унтан отрăад контратакă пуçланă та, марроканĕçсене кайала ывăтса ăанă.

Кончита Мало ăотчикĕн паттăр çĕр республикăн ăотчикĕсен шкулĕнче тата геройлăхне кăтартакан пример пулса тăрать. 1934 çулти восстание пуçарнă хыççăн перес кĕлеткĕ Астури горăсĕнче хĕрĕ Кончита Мало фашисла авăхав пуçлансан малтанхи кунсенчех ăотчинă пулса ĕçлеме тытăнă.

Фашиссен çарĕсем вырнаçнă çĕрте разведкăлă питĕ кирлĕ заданийĕ пурнăçласа, Кончита Мало çĕр çумĕнче вĕçсе салтаксен пуçĕ тăрĕнченех иртсе пынă. Машинăне персе лектерсен вăл ӳкнĕ. Çĕре анса ситсенех ăна фашиссен тискерленсе кайнă салтакĕсем хупăрласа илнĕ. Тахăшĕ пĕри ăна прикладпа пуçĕнчен çапнă, вара вăл тăвне сухатнă. Тăн кĕрсе ситсен, Кончита хăйне сыхса пăрахнине, вăл темле пӳлĕмре выртнине тата ун тавра фашиссен офицерĕсем пурăнакăсене тăвине курнă. Вăл ĕçлекен аеродром çинчен мăтса пĕлесшĕн пулса фашиссем ăна асаплантарма пуçланă.

— Мана асаплантарса вĕлерес пулсан та, пĕр сăмах та мăтса пелĕмĕр!— тенĕ вăл фашиссене хирĕç.

Вара пĕр ватă офицер, иттисене пурне те пӳлĕмрен кăларса ăарса, Кончитан аллисене салтнă та, ăна пăлхавçăсем патне службăна куçтăр тесе вĕлĕртме тытăнă. Кончита инкĕнне те килĕшмен.

Каласа хушăра Кончита ĕçтел çинче брăунинг выртнине асăрханă. Май килнĕ хушăра вăл браунинга савăрса тытнă та, алăк патнелле сиксе ӳкнĕ. Пăшал сасси илтĕнсе кайнă Пур ĕнчен те çынсем чупнă. Такам Кончита ури çине сикнĕ те, вăл ӳкнĕ. Хĕнесе йăна ӳкернĕ хĕрачана тĕрмене илсе кайнă. Тепĕр кунне фашисла листокĕсене çăлăн пек вăйăтăк тухнă:

„Хăй вăхăтĕнче персе пăрахнă коммунис хĕрне, хăрушă заговорщичăй Кончита Мялова асаплантарса вĕлернĕ. Ун кунçулĕ çапла пулăни, республикăн çинчен ĕнĕтленекенсене пурне те хăратса тăтăр".

Пăлхавçăсемпе фашисла интервентсем республикăн ăотчикĕсене вĕсем хăраксăр, паттăр пулăннăн кураймасăр, çăвăнна та çăвăсем патне ăанса лекекенсене тискер кайăкла вĕлерĕççĕ. Кончите Мало кунçулне пеккине, урса кайнă тăшман аллине лекнĕ республикăн ăотчикĕсем пĕри çеç курман. Хозе Галарса ăотчике халиччен илтмен тискер кайăкла вĕлернине аса илни те çителĕклĕ. Унăн ӳтне татăкăн татăкăн касса вакласа йăвăç йĕпчĕк йăшне хунă та, Мадрид тĕлне парашӳтпа пăрахнă.

Анчах ун вырăнне республикăн ăотчикĕсене Испани халăхĕ йăратать.

Акă тăшмансемпе тытăçнă вăхăтра авари тӳснĕ республиканĕçĕн ăотчикĕсем хресченсемпе тĕлпулнине кăтартакан пĕр картина. Куа çинчен Андре Маљро сырса илнĕ.

Машинă ӳссе сĕмĕренле вырăна пĕтĕм ăвал чупса тухнă. Чăрмакланса тăракан хурçă куни, ялă пек хутланнă пропеллер тата ăур çинче выртакан ӳтсем курăна пуçласан хресченсем чăрăнса тăнă. Икĕ ăотчик вĕсене хирĕç утса пынă. Хресченсем тата хура тутăрсем сыхă хĕрăрăмсем ушкăнĕнпе пĕр сиккеленмесĕр мĕн пуласса кĕтсе тăнă. Унтан хресченсенчен пĕри, вĕсем патнеле пыракан икĕ ăотчик ĕненнине мар, çĕрте выртакан ӳтсем ĕненнине часрах аллине чăмăртаса çĕкленĕ. Вара пĕрин хыççăн тепри, чăмăртăвă аллисене çӳлеле çĕкленес, çĕмĕренле самолăта тата вилнĕ пуљ тесе шутланă ӳтсене хресченсем сăлăт панă.

Акă тата тепĕр картинă. Республикăн пĕр ăотчикĕн, бељгийецăн, Санта Мария ялĕ патĕнче иркĕсĕр анса ларнала пулнă. Хресченсем ăна хупăрласа илсе сыхса пăрахма тытăнă. Вĕсем ăотчик фашис пулĕ тесе шутланă.

—Ĕçе пирĕн ăчасем валăн вилĕм илсе килетĕн,—тесе хăшкăрнă кăвакарăл çӳçлĕ хĕрарăм.

Ăотчик хăй республиканĕçсемшĕн сапăçнине яран-яран йăлатарса панă вĕсене. Вара хресченсен кăмăлĕ улшăннă.

— Комер, коморадо!—хăшкăрнă кăвакарăл çӳçлĕ йăлтăнăн хĕрарăм. Вăл пӳрнисене пĕр çĕре чăмăртанă та вĕсене хăвăрт-хăвăрт хăйĕн шăлсăр çăварĕ патне илсе пынă. Пурте пĕр пĕринчен ăмăртмала хăй патне ыхăрнă. Ăотчик вĕсене телефонпа питĕ васкавлă штаба пĕлтерме кирли çинчен ĕнентерме тăрăшнă. Анчах хресченсем ăотчике малтан çитерне, пĕр стакан ерех ĕçтерцĕ те, вара тин телефон патне илсе кайнă. Ăотчик кайăла вĕçсе кайнă чухне:

— Ăотчиксене салам кала. А тен Долореса куратăн: ăна та кала...— тенĕ хресченсем.

Вăрçă пуçламăшĕнче,—тесе сырнă иртнĕ çулхи çуркунне Стивен Спендер Лондонри „Дейли уоркер" ăатлă коммунисла хăçатра,— Испании сывлăш флотĕнче ăут çĕршывсенчен пынă ăотчик-доброволецсем питĕ нумай пулнă. Хăш ăут çĕршывсенчен пынă нумайăшĕ ăотчиксене килĕсене ăна. Правительствăла авиацин ăотчикĕсенчен тăхăрнурă процентĕ — испанецсем, тата вĕсенчен çавăн чухлех процентĕ—коммунизма партии членĕсем. Испани сывлăш флочĕ Испенрăри ун пайăх сывлăш флочĕсенчен пĕри. Правительствăла вăрçăра çĕнтернĕ хыççăн, Испани республики хăйĕн национализацилене çар промышленнăçĕне тата Барселонăри самолăтсем тăвакан савăкечĕсене тĕнчери авиацийĕ чи пысăк державăсенчен пĕри—демократин пултарулă сойузникĕ пулса тăрĕ.

Испани халăх авиацийĕ тĕлĕнмеле çĕнтĕрĕсем туни,—тесе вĕçлет автăр хăйĕн статйине,—Франко вăрçăра çĕнтерме пултарайманнине ĕненмелех кăтартса парать.

Испани писательĕнчи Марийа Тереза Леон та 1937 çул пуçламăшĕнче Мускавра „Авиаци хăçатĕн" сотрудникĕне каласа чух çакăн çинчелех калаçă.

— Сунатăл бойецсем,—тенĕ вăл,—правительствăпа çарăн чи паттăр мăнăйсем.

Марийа Тереза Леон, республикăлă Испани халăхĕ хăйĕн авиацине йăратнине, бойецсем унăн ретне тăма туртăннине кăтартакан лайăх факт кăтартса панă. Мадридри авиаци шкулĕсенчен пĕри курсантсем илесси çинчен пĕлтернĕ. Вăл шкулăн пурĕ виççĕр вырăн пулнă. Анчах çав шкула кĕме, авиаци техникине алла çăвăрса илессĕн çунакансем сакăр пин çын пухăннă.

— Республикăлă Испанири çамрăксем пурте ăотчиксем тата танкистсем пулассăн кĕсе калаçаçан, епĕ йăнашăлп,—тенĕ писательницă.

„Испани çуначĕсем" ăатлă кĕнекере республикăлă Испани ăотчикĕсем çинчен Совет Сойузĕнчи тата ытти çĕршывсенчи хăçатсемпе журналсене тухнă очĕркесене кăларсене пухса пичетленĕ. Генерал Миаха республикă ăотчикĕсем çинчен калани кĕнекен кĕске умстатйи пуласа тăрать.

„Пирĕн ăотчиксем,—тесе сырать генерал Миаха,—çывăлăпа хуçа пулса пырăççĕ. Вĕсем çĕнтерес шанчăкпа çапăçаççĕ тата вĕсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр çапăçнине ташшисăн пĕр ăотчикĕ те таплалма пултарайманăст. Кăна фашисла ăотчиксем кăнтăр сутăпне пĕрре те тенĕ пекех çапăçăва кĕмĕн-факт та лайăх ĕнентерес парат. Атакă тума вĕсем тĕттĕм пуласса кĕтĕççĕ, анчах унчух та вĕсем инкĕн те тăвайăмаççĕ".

Кĕнекере çырнисем пурте Испанири вăрçăн малтанхи çулĕ çинчен каласçĕ. Унтанпа пĕр çулталăк ытларах иртрĕ, çак хушăра республикăлă Испани çуначĕсем тата ытларах çирĕплеличĕç. Фашисла авиацийĕ хирĕç, Испани халăхĕн ирĕклĕхшĕн, никама та пăхăнасмарăхшĕн кĕрешес ĕçре республикăлă авиацийĕн петем тĕнче умĕнче çĕнĕрен тĕлĕнмелех геройлăх тӳсĕмлĕх, хăйăлăх кăтартнă.

Машина-трактăрлă станцисемпе машина-трактăрлă мастерскойсен трактăрсене кĕркунне тата хĕллехи йусама хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртса çирĕплетнĕ тесе шутлат: 1937 çулта машина-трактăрлă станцисем трактăрсене кĕркунне тата хĕллехи йусама начар хатĕрленнине пула—трактăрсене йусас ĕçе пачах çителĕкĕр иртернĕ.

Трактăрсене йусас ĕç декабрĕпе январь уйăхĕсенче çеç саралса каймă, йусанни пахалăхне тата трактăрсене йышăнассине начар контроль тунă.

Мастерскойсене вăхăтра йусаса оборудовани туман пулнă.

Нумай МТ Станцисенче трактăрсене йусас тĕлешпе ĕçлекен рабочисен кадрне çав ĕçре çирĕплетсе хăварман, ĕçе организацилемен, куçтурăпа йăла условисене туса паман пулнă.

МТС директăрĕсемпе механикĕсем сахал опытлă трактăриссене техникăна вĕренме тата ĕçре хăйсен квалификацине ӳстерме сахал пулăшаççĕ.

Çаксем пурте ĕнтĕ чылай МТС-сенче—Шупашкар, Ишлей, Тутаркас, Патăрĕел, Пăрачкав т. мт. МТ Станцисенче трактăрсем сухалама тухсан çĕмĕрĕлесси патне илсе пынă, вăл трактăрсене çĕнĕрен йусама тивнĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртат: Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата МТС-семпе МТМ директăрĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене пуçа илмен тата кăçал трактăрсене йусама хатĕрленес ĕçе сарса йаман. Мастерскойсен строительствипе оборудованине туса пĕтермен. Трактăрсене йусакан рабочисен кадресене тупса тăвермен.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, МТС-семпе МТМ директăрĕсене çаксене тума хушас:

а) кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасар трактăрсене йусама пуçласа, вĕсене 1939 çулти мартăн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмпех йусаса пĕтермелĕ, çавна валăхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен хатĕрленӳ ĕçĕсене пурне те туса çитермелĕ;

б) МТС директăрĕсен Канашна Çĕрпӳ МТ Мастерскойĕсемпе вунă кун хушшинче тивĕçлĕ договăрсем тумала тата Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çирĕплетнĕ планпа график тăрăх трактăрсене йусама МТ Мастерскойĕсене илсе пымала;

в) чи лайăх комбайнерсенчен, механиксенчен, трактăр бригадисен бригадирĕсенчен тата трактăриссенчен халех трактăр йусакан бригадăсем тума пуçламала;

г) кăçалхи октябрĕн 1-мĕш тĕлне рабочисем валăхи куçтурăпа йăла тата çуртăвĕр условийĕсене пурне те туса памала;

д) трактăрсене йусанă чухне ĕçе тĕрĕс организацилес, государствăпа дисциплинăри тата техникăпа йĕнчен çирĕп контроль тăвас пăтусем çине уйăрăмах çăвăрăнса пăхмалă.

2. Детальсем мĕнле салтавпа вăхăтсăр йурăхсăра тухнине пĕлес тата трактăра мĕнле йусамалине палăртас тесе, МТС директăрĕсене трактăрсене йусама панă чухне кашни трактăрах техника йĕнчен тĕплĕн пăхса тухма хушас, трактăрсене техникă йĕнчен пăхса тухнă чухне унта механик-бригадир тата çав трактăрпа ĕçлекен тракторист пулмала.

Дирекци трактăрсем çумĕнче мĕнле çитменлĕхсем пурринне палăртса çырнă ведомăсене трактăриссенчен йышăнмасăр, трактăра йусама пама чарас.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне çакăн пек йĕркене тума хушас: трактăрсене йусанă вăхăтра йусав пахалăхне МТС директăрĕне асла механик хăйсем контроль туса тăмаҫа пултăр.

Йусаса пĕтернĕ трактăра МТС директăрĕпе аслă механикăн тата çав трактăрпа ĕçлекен трактăриссăн хăйсен йышăнмала.

МТ Мастерскоĕнче йусанă трактăрсен пахалăхĕшĕн ответлăха МТМ директăрĕпе аслă механикĕ çине хурас. Трактăрсемпе саманала ĕçлесе пăхнă чухне палăрнă мĕн пур çитменлĕхсене МТ Мастерскойне çине тата начар йышăнăн яйăлла çынсем çине хурас.

4. Йалхуçалăх снабженине Алексейĕв йулташа тата „Автотрактородеталь" агенствине Клокав йулташа запаслă пайсене, материалсемпе инструментсене пĕтĕмпех кӳрсе килме хушас, çав запаслă пайсемпе материалсене IV-мĕш квартална йусамали трактăрсем валăхи III-мĕш квартăлта, I-мĕш квартăлта йусамалисем валăхи—IV-мĕш квартăлта кӳрсе килмелĕ.

5. Райĕстăвкомсен председательĕсене райĕстăвком президиумĕн ларăвĕсенче трактăрсене йусамали кампанине хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен МТС тата МТМ директăрĕсен доклачĕсене итлеме, çирĕплетсе пана срукра трактăрсене пĕр сăмахăпах йусаса пĕтермелĕ тăвас тĕлешпе татăкла ĕççем туса иртерме хушас.

6. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕсен Ç. К. Коротков йулташа кăçалхи çентябрĕн 10-мĕшĕнче трактăрсене йусама хатĕрленес ыйтупа тата трактăр ĕçĕсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен МТС директăрĕсемпе райĕпĕç пай пуçлăхĕсен канашлуне иртерме хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательĕн заместительĕ А. СОМĂВ.
Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕç ĕçене пăхаканĕшĕн В. ЛЕБĔДĔВ.

Шупашкар хули,
1938 с. сентябрĕн 8-мĕш.

„Цыганская Заря" колхоз (Сталинград облăçĕ) ишӳтурлă та пуйан пурăнат. Колхоз садĕнче 10 вăлле партăпа. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Колхозри стахановкă Е. С. Лимонскайа вăллесене тĕрĕслет.

Маклецов фото-Укерчĕкĕ (Совъюзфото)

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республикăра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пачах çителĕкĕр пынине палăртат. Ишлей, Патăрĕел, Йĕтĕрне, Турхан, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Елĕк тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç уйăрăмах йăпах пулса пырат.

Райĕстăвкомсен председательĕсем, райĕпĕçпайĕсен заведуйушчийĕсем тата МТС-сен директăрĕсем, лайăхрах çанталăк пуласса кĕтсе, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе киреҫĕр тăсса пырççĕ, кĕрхи çĕртмене вăхăтра туни—пысăк тухăçлă тырпул илмели—тĕп условиссенчен пĕри пулса тăнине манса хăварççĕ.

Терĕслесе пăхса çакна палăртнă: чылай колхозсенче кĕрхи çĕртмене тунă чух агротехникăна пăсаççĕ, ашăк сухалаççĕ, хире удобренисем кăлармаççĕ. Райĕпĕçпайĕсемпе МТС-сен агрономĕсем кирлĕ пек контроль туса пымаççĕ, суханлани пахалăхĕшĕн, агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕпĕçпайĕсене, МТС-сене тата колхозсен правленийĕсене çакна тума хушас: МТС-сене пур трактăрсене те (авăн çаппăн çĕрте ĕçлекенсемĕр пуçне) кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе куçармала, колхозсенчи туртăм вăйăнчен кĕрхи çĕртме тума кирлĕ чухлĕ уйăрса памала, çапла мăйпа кăçалхи октябрĕн 1-мĕш тĕлне кĕрхи çĕртмене йăлтах туса пĕтермелĕ тумала.

Кĕрхи çĕртме пахалăхне хăнăрах ĕç çине уйăрăмах пысăк тимлĕхпе пăхмалă, ку тĕлешпе пур трактăр бригадисемпе колхозсенче те трактăриссемпе плугарсен производствăлă канашлăвĕсене туса иртермелĕ.

2. Йалхуçалăх снабженине Алексейĕв йулташа МТС-сене трактăр плугĕсем валăҫи кирлĕ запаслă пайсем татти-сыпписĕр, çителĕклĕ парса тăма хушас.

3. МТС-сен директăрĕсене трактăриссемпе прицепшниксем валăҫи кĕрхи тапхăрта ĕçлеме кирлĕ пек лайăх условисем туса пама, пурăнмали будкăсене йусама тата ăшăлатма хушас. Колхозсем трактăр бригадисене апат-çимĕç продуктăсем мĕнле парса тăнине контроллесе пыма хушас.

4. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕстăвкомсене тата йалхуçалăх снабженине: мĕнпур пек минерал çăнăхĕсене тата ытти тĕрлĕ удобренисене хире кăларма,вĕсене кĕрхи çĕртме сухи айне, пуринчен те малтан техникăлă куçтурă акмали çĕрсем çине тăкса хăварма хушас.

5. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ МТС-сене çакна тума хушат: кĕрхи çĕртмене палăртнă сруксенче тата пысăк пахалăхпа туса иртерессишĕн колхозсемпе трактăр бригадисенче чăн-чăн социалисăмлă ăмăрту сарса ăмала тата стахановăва ĕç метăчĕсене ĕçе кĕртсе пымала.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательĕн заместительĕ
А. СОМĂВ.
Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн
В. ЛЕБĔДĔВ.

Колхозри пулăшу касси

Колхозсенчи пĕр-пĕрне пулăшаканах кассăсем пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Çав кассăсем кашни колхозра тенĕ пекех пур. Карк Сырминчи (Хĕрлĕ Чутай р.) „Хĕрлĕ йалав" колхозра та пĕр-пĕрне пулăшакан касса 1933 çултанпа ĕçлет. Малтанхи çулсенче касса йĕркелĕн ĕçлесе пырайман. Вăл вăхăтра приходпа расход сметисемсĕр, плансăр ĕçленĕ.

Кассă ĕçне 1936 çулта çăна йĕркеленĕ. Çав çултан вара кассă приходпа расход смети тăрăх ĕçлесе пыма тытăнат. Тырпулсене ӳсрамали келетсем тунă. Тырпулсене тасатма машинăсем туйăнна. Колхозниксене кивçен панă тырпулсене хăйсен сруккĕсенче пустарса пынă.

Пĕр-пĕрне пулăшакан кассă колхозниксене пысăк пулăшу парат. 1937 çулта кассă вăй суратнă 13 колхозницăна пулăшнă, 68 колхозника 109 центнĕр тырă тавăрса панă мар парса пулăшнă, 6 хуçалăха ĕне илсе панă.

1938 çулта кассăн приход тăрăх 135 центнĕр тырă пулнă. Колхозри инвалидсене, вăта пирки ĕçлеме пултарайман колхозниксене, тăлăх асăсене, красноармейĕсен çемйисене 76 пăт тырă кайăла илмеле мар парса пулăшнă. Çавнашкалах кассă колхозниксене уҫăн ссудă парса пулăшат. Акă, И. Горланăв колхозник кил-çурчĕ çунса кайсан, ăна 100 тенкĕ панă, пурĕ 5 çынна уҫăн парса пулăшнă. Çĕрулми вăрлăхĕ тата хуçалăхра кирлĕ пулакан ăпăлăсене туйăнма пуманăй колхозниксене пулăшу панă.

Колхозри пĕр-пĕрне пулăшакан кассă лайăх ĕçленине унăн авторичĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче пуманăй ӳсрĕ.

Г. Куçмин.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановăла çирĕмкунлăх

Иккĕмĕш кун

(Строительствă управленийĕн сводки тăрăх)

Çентябрĕн 11-мĕшĕнче строительствăра пĕтĕмпе çуранисем 1573 çын, лашалисем 180 çын ĕçленĕ. Шупашкар районĕнчен 335 çын, 97 лаша, Ишлей районĕнчен 84 çын, Çĕрпӳ районĕнчен 186 çын, 25 лаша, Трак районĕнчен 178 çын, 35 лаша, Шăхасан районĕнчен 141 çын, Канаш районĕнчен 115 çын, 29 лаша ĕçленĕ. Малтанхи кунна танлаштарсан ĕç вăй хисепĕ нумай ӳсмен.

Пĕр кун хушшинче тĕп ĕççине 28200 тенкĕлĕх тунă. Çапла вара стахановăла çирĕмкунлăхăн иккĕмĕш кунĕнче те строительствăра планне тултарас тĕлешпе татăклă улшăнӳсем тăвайман.

Строительствăна ĕç вăйĕ тăратас тĕлешпе уйăрăмăнах Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар районĕсем начăр ĕçленĕ. Тĕслĕхрен, пайăнхи кунна Сĕнтĕрвăрри районĕнчен пĕтĕмпе те 4 çын çеç ĕçлеççĕ. Вăрмар районĕ те нумай мала каймăн.

Стахановăла çирĕмкунлăхăн задачĕсене йăнăслăн тата пама ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулни кирлĕ. Райĕстăвкомсемпе парти райкомĕсем вăхăта вăраха йамасăрах чукунçул строительствине ĕç вăйĕ тăратас пирки Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленине пурнăçа кĕртмелĕ тăвас пулат.

Комсомол организацисен строительствăра ĕçлеме пин комсомолецран кайа мар организацилемелĕ. Халăхи вăхăтра комсомол организацисем сӳрĕк ĕçлеççĕ-ха.

Участнăсенчен пĕлтереççĕ

Пĕрремĕш участкă. (Хамăр корр.). Рабочисемпе колхозниксем стахановăла çирĕмкунлăхăн пысăк активлăхпа ĕçлеме тытăннипе кĕтсе ирчĕç. Çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕнче вокзал тунă çĕрте ĕçлекан каменщиксем пурте нормăна ытлашшипех тултарнă. Живулин йулташ 333 процент ытла, Кузнецов йулташ бригади 277 процент, Белов йулташ 201,5 процент тултарнă. Вокзал тунă çĕрти рабочисен бригадисем те малтанхи вăхăтриччен лайăхрах ĕçленĕ.

Çĕр чавă çĕрте ĕçлекен рабочисен бригади (бригадирĕ Абдулманăв) нормăна 159 процент тултарнă. Вăл бригадăн пур звенисем те хăйсен нормисене 138 процентран каҫа мар пурнăçа кĕртнĕ. Çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕнчĕх участкăра ĕçлекен чылай колхозниксем тата колхоз бригадисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Шупашкар районĕнчи Молатăв йăвĕнче тăракан колхоз бригади нормăна 236 процент, „Самолет" колхоз бригади 130 процент тултарнă. „Молния", „Моряк", Ворошилăв тата Водопăнăв йăвĕнче тăракан колхозсем те лайăх ĕçлерĕç.

Рабочисемпе колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсен пултарулăхĕне çĕклесе йĕртсе пырсан ĕç тата та хăвăртăн малалла каймала. Участкă руководительĕсен тата инженерлă-техниклă работниксен сӳрĕклĕкĕ ĕçре чылай чăрмав кӳрет. Пĕтĕм участкă ĕçне çирĕп график тăрăх йĕркелемелĕ-ха. Çавна пула йĕркеçĕрлĕхсем пулаççĕ. Акă ĕç вăйĕне усă курассинех илер. Шупашкар районĕнчи „11 лет Октября" колхозăн пынă вăçĕ лаша ĕç вăхăтра тупса паман пирки 5 сехет хушши ĕçлемесĕр тăнă. Бетон хутăштаракан станок ĕçлемен пирки каменщиксем икĕ сехет простой тунă. Анчах кунашкал

Иккĕмĕш участкă. (Хамăр корр.). Стахановăла çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕнче Лавренĕв йулташ йĕртсе пыракан çĕр чавакансен бригади мала тухрĕ. Унăн бригади 10 сыпăлă тăрăх. Вĕсем пурте нормăна ытлашшипех тултарнăç. Бригадă пĕтĕмĕшне илсен нормăна 215 процент тултарнă.

Участкăра лайăх тĕслĕхсем пыраканбригадăсем сахал мар. Караҫăев йулташăн 10 сыпăлăн тăракан бригади нормăна 205 процент, Васильев йулташ йĕртсе пыракан платниксен бригади 148 процент тултарнă.

* * *

Виççĕмĕш участкăри Рубцова йулташ йĕртсе пыракан хĕрарăмсен бригади Кустарина йулташ бригадине социалисăмлă ăмăртăва тухса нормăна 150 процентран каҫа мар тултарса пыма пулчĕç. Вăл бригадăсем ăмăрту договăрĕнче катартнисене сентябрĕн малтанхи пилĕкулăхĕнчех пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Рубцова йулташ бригади сентябрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа нормăна куллен 146 процентшăн тултарса пырат. Çавнашкалах участкăри пилĕк стахановăвçи Зайцев йулташ йĕртсе пыракан бригадă нормăна 158 процент тултарат.

Срукра туса пĕтересситтĕн

Çĕрпӳ районĕнчи „Серп" тата Куйбышев йăвĕпе тăракан колхозсен членĕсенчен организацилене бригадă строительствăри 49-мĕш километрта иккĕмĕш уйăх ĕçлет. Бригадăна Терентьев йулташ йĕртсе пырат.

Ĕç дисциплинине тата ĕç вырăнĕсене тĕрĕс йĕркеленĕ май бригадă хăйне панă плана йăланах тултарса пырат. Простой ĕне пророгул тăвакансем те çук.

Бригадăна 4 звенона уйăрнă. Çапла туни уйăрăмăнах ĕçре çитĕнӳсем тума пулăшат. Звеносем

10-шар кубла метр турттараççĕ

КАНАШ. ПСК(б) Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чукунçул строительствинче стахановăла çирĕмкунлăх иртересси çинчен йышăннă постановленийĕ „Канаш" колхоз членĕсем тулли кăмăлпа кĕтсе ирчĕç. Постановленийĕ сӳтсе-явнă хыççăнах, сентябрĕн 5-мĕшĕнче 15 çын 8 лашапа чукунçул строительствине ĕçлеме тухрĕç. Халĕ вĕсем тăрăшсах ĕçлеççĕ. Кашни лаша пуçне куллен 10-кубла метр çĕр чавса турттараççĕ.

В. Константинăв.

Çăмрăксен Пĕтĕм тĕнчери XXIV-мĕш кунне Шупашкарта уйăвланни

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Сентябрён 11-мёшёнче Сийерра де Кабаъс районёнче (хёвёлтухаçри) республиканецсен позицийёсене атакăдама хăтланнă анăçсăр пулнă хыçран, пăлхавçăсем хăйсен операцийёсене Гает районне тата Вилабєрт тўремине куçарма. Фашисла артиллерипе авиаци активлă ёçленё пулин те, республиканецсем пăлхавçăсен сав районри атакисене хирёç хытă тăнă.

Сăпăçусем вăхăтёнче тыткăна илнисем пăлхавçăсен çарё пысăк сухатусем тунă пирки унти офицерсемпе салтаксем хăйсен ёçёсем çирёп марри çинчен калакан сведенисене çирёплетеççё. Пăлхавçăсен командованин распоряженийё тăрăх, аманнă салтаксем госпитёльçинчен вёсен сывалмăш сруткё пётичченех кайаль, фронта тавранаççё.

Вăтăр фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Испанири пăлхавçăсем тата Италипе Германи интервенчёсем Ебро фронтенче пысăк сухатусем тўсеççё. Йулашки ерне хушшинче çёç пăлхавçăсенне 10 пин çын вёлернё тата аманнă.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра, Цзйанси провинцин çурçёр пайёнче, пысăк çапăçусем Наньканран (Цзўцзяньтен кантăр ёнпеле) кантăрала пулса тăраççё. Сентябрён 10-мёшёнче Йапонин икё колонни, артилляри хўттипе, Китай позицийёсем сине наступлени тунă. Йапонецсем каллех вёлерекен газсемпе усă курнă. Китайёсем ёнче çан газсенчен-машинисем—батальйонран кăна мар. Анчах, артиллерирен хыттăн персе тăнине тата газсем йăнине пăхмасăрах, китайёсем йапонецсен пур атакисене те сирсе пăрахнă.

Çурçёр Китайра, пысăк çапăçу пулма хăçăн, сентябрён 11-мёшёнче китайёсемпе йапонёсен гарнизонне Венçан хулинчен (Кайфынран хёвёлтăç ёнпеле) хёссе кăларнă. Йапонецсен 400 çын ытла вилнё. Китай çарёсем пилёк тунă, 40 ытла пулемет тата вăрçă снарйăвенисем нумай турткă илнё. Çапăçусем Цзун Йи сывăхёнче (Венçанран хёвёлтăçнелле) пулса иртеççё. Йапонин Бозйран кайăкан отрйадне китайёсем атаканă. Çапăçура 80 йапонец вилнё, вёсенне икё пулемет тата 60 винтовкă турткă илнё.

(ТАСС).

Люксембург чиккинче Германи укрепленийёсем тăваç

Англи пичечё пёлтерйё тăрăх, Германипе Люксембург хушшинчи чикёре (Германи, Франци тата Бельги хушшинче тăваткăн пысăках мар кнъяжёства) йулашки вăхăтра Германи фашисемён питех те ак тивлăн ёçленипе палăртаççё. Йавăр тийёсё грузовиксем чикё хёррине вёçёмёр нумай пырса тăраççё. Грузовиксемпе йăвăç материалсем, пралуксем тата строительстви материалёсем тийёсе чике хёрринчи вăрмăнăл вырăна турттарса пыраççё, унта рабочисемпе салтаксем укрепленисем тунă çёрте ёçлеççё. Ёçлеç,—тесе сыраг корреспондент,—пысăк хăвăртлăхпа пыраççё. Çак ёçленче салтаксем ёçлеççё, вёсене кашни икё ёрнерре шёрре улăштарса тăраççё.

(ТАСС).

Совет Сойузё тăрăх

● Октябёрти Аслă Социалисăмлă революци 21 çул тултарнине тивёçлёнкётсе илес майпа, пётём çёршыв тăрăх социалисăмла амăрту сарăлса пырат. Верхне-Исетск савăтри (Урал) крупносорт цехёнчи рабочисен коллективе сентябрён, 1-мёшёнчен пуçласа прокат, тăвас плана йаланах иртерсе тултарса пырат. Машинист Скăварав Краснойарск чукунçулёне тавăрăл вакунсен составёсене хăвăрт илсе çўрессине рекорд туйă. Икçёр тёнелле пушă состава Кăукваннăйа станцăран Краснойарска график тăрăх 6 сехет хушшинче илсе ситерес вырăнне 2 сехет хушшинче илсе ситерйё.

● Сентябрён 9-мёшёнче машинист-комсомолец Павел Фадеёв Одессана насе пынă тăварăл пуйăса йышăннă çул çине йана пулнă. Сав тери хăвăрт тормаз тунипе, Фадеёв крушени пулма паман. Савăн пек сыхлăхшăн ăна награда панă.

● Коломнăри Куйбышёв йачёпе тăракан савăт примере тăрăх Ленинградри предприйатисем туса иртерекен оборудованисем обществăлăа осмотрё машинăсене йăлах пăхса-усраса тăмали анлă йухăм пулса тăнă. Кировск савăтёнче осмотра стахановёнчесем тата инженерла-техникăла работниксем 3 пин çын ытла хутшăннă.

● Ленинградри Салтыков-Шчедрин йачёпе тăракан публичнăй библиотекă выраççен палла сулçуревçисен — Пржевальский тата Козлов ёçёсемпе паллаштарма выставкă тăваç.

● Бирск районёнчи (Башкир АССР) Старо-Петровск йалсоветёнчи Старцёв колхозник Белайа йăтаă йуханшыв хёрринче мамăнтăн икё метр вăрăмёш бинённе (тулалла тухса тăракан сăмса шăмми) тупнă. Ăна крайведенин республикăри музейне кайса панă.

КЁСКЕН

Шкулти киоск. Муркашри (Туткасси р.) вăтам шкул вёренекенесем вальăн 7 пин тенкёлёх тёрлёрен учебниксем илнё. Çак кунсенче тата шкул çумёнче киоск уçăпăнă. Киоскра учебниксем, карандашсем, ручкăсем тата ыттине те сутаççё.

И. Скворцов.

Вёренекенён библиотеки. Сикассинчи (Канаш р.) вăтам шкулта VIII-мёш класра вёренекен Иван Зайчёв библиотекинче тёрлёрен кёнекесем 200 шутланаççё. Илемлё литературăпа кёнекисенчен „Çурă çеремё", „Партизансем", „Хёнкур айёнче", „Амăшё" тата ыттине те пур.

Н. Афанасьёв.

Почтальён Макарёв. Пашйелёнчи (Турхан р.) почтальён В. Макарёв çасăр-журнал сарассипе тăрăшса ёçлет. Халь, сентябрён пуçласа йала 490 экземпăляра йăхăн тёрлёрен хаçат-журналсем пырса тăраççё. Макарёв вёсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет.

И. Архипёв.

Йединоличниксем колхоза кёреççё

● КАНАШ. Карăкăл йалсоветёнче ССРС Верховнăй Совечён Иккёмёш Сессине „Ўйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствăна налогё хурасси çинчен" йышăннă саккуна халăх хушшинче тёплён аплантарса парсан, Аксаринăй йалёнче 19 хуçалăх 79 йеткине, Карăкăл йалёнче 7 хуçалăх 29 йеткине, Çатăрка йалёнче 6 хуçалăх 27 йеткина колхоза кёчёç. 6 хуçалăх колхоза илме хăйăвланни сырса панă.

И. Зайчёв.

● ШАХАСАН. Мăнкури „Самрăк колхозник" колхоза çак кунсенче 6 ўйрăм хуçалăх кёчёç. Ялти агитаторсем халăха ССРС Верховнăй Совечён Иккёмёш Сессине йышăннă саккунсене аплантарса пыраççё. И. Йăкавлёв.

Ленин йачепе тăракан совхоз (Сочи хули) ССРС-че чи малтанхи хут ананас туса илме пуçланă. Ананас 11 уйăхранах çимёç парат.

ÝКЕРЧЁК ÇИНЧЕ: Светланăчкă Йаценко ананассемпе.

М. Редкин фото-ýкерчёкё (Сойузфото)

Аça çапасран мёнле майпа хăтăлмала

(М. Галкина йулташ ыйтăвё çине ответлени)

Çиçём, аслати электричёствă разрйачёсемпе пулнине астумала. Аça çапасран хăтăлас тесен электричёствă свойствисене лайăх пёлмеле.

Электричёствă разрйачё пулас умён электричёствă пёр-пёр çёре пухăнмала. Атмосферăри электричёствă пăуслă пулсан, вăл пухăнна вырăн тёлёнче, çёрте минуслă электричёствă пухăнат. Çёр çинчи минуслă электричёствăна атмосферăри (сывлăмри) пăуслă электричёствă туртăп пирки çўлё хуралтăсем тăрне, йăвăçсем патне пухăнат, хăй йенелле атмосферăри электричёствăна туртат. Сителенлё сывхарсан атмосферăри электричёствă сывлăш витёр куçса çёре кайат. Çакна вара электричёствă разрйачё теççё. Электричёствă разрйачё хăш чухне атмосферăпа çёр хушшинче, хăш чухне атмосферăра анчах пулса иртет.

Электричёствă разрйачё пулнă вырăн сыпăхёнчи тёрлё чёрлёхсем аманма та, вилме те пултараççё. Разрйад пуринчен ытла çўлё йаналаçем урлă кайнине астумала. Çавăнпа аслатилё - çиçёмлё çăмăр вăхăтёнче çўлё йăпăлаçем сывăхёнче тăма йурамасăр. Аялăмăлăрах вырăнта тăрсан хăрушăсăртарах пулат.

Килсуртсене электричёствă разрйадёнчен хăтармали хатёр пур. Ана громоотвод теççё. Громоотвода тума çăмăл. Тутăхман металлран вёçне лайăх шёвёртнё хулăна çурт тăрне лартмала. Çак шёвёр хулăн айал вёçё çумне металлран тунă проволокă сыпăçтарса, сурт айккинче çёре ситичченех антармала. Проволокăн айал вёçне пёр-пёр металл листи сыпăçтарса çёре хăвармала. Çапла тусан громоотвод тăвас ёç пётет те. Малашне громоотводăн металлран тунă хулли тутăхсран анчах сыхланмала.

Громоотводăн çўлти шёвёр вёçёнче електричёствă пухăнма пултараймаçт. Громоотвод лартнă çурт тёлне електричёствăла сывлăш пырсан, проволокă тăрăх громоотвод вёçне електричёствăн пырат. Çак електричёствă металлран тунă хулăн шёвёр вёçёнче пухăнса тăмаст, хуллен сывлăша кайса пётет. Çакăн пирки електричёствă разрйачё сасартăк пулмаст, хуллен пулат. Хăш чухне громоотвод тăрăх електричёствă сывлăша куçса пётеймест. Кун пек чухне разрйад громоотвод тăрăх кайат. Анчах апла пулсан та çуртёре хăрушă мар, мёншён тесен електричёствă громоотводăн проволоки тăрăх кайнă пирки çуннекан йапаласене хёртме пултараймаçт.

Громоотвода Америкă çынни Франклин шухăшласа кăларнă.

Ф. Куçмин.

Çар ёçне вёренеççё

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине кётсе илме хатёрленнё май, „Йанмурзино" колхоз (Трак р.) сумёнчи Осоавиахим пуçламёш организацийёнче лайăх ёçлеме пуçларе. Осоавиахим членёсем 50 çын шутланаççё, вёсем пурте билетсене улăштарнă.

Осоавиахим организацийё сумёнче çар ёçне вёренме кружок уçнă. 5 кунта пёр заньати пулса иртет. Ку вăхăта çитсе 4 заньати туса иртернё. Заньатисенче строй йёркине, Хёрлё Çар уставне, винтовкăн материаллă пайёсене вёренеç. Çавăн пекех кружокра политикă заньатийёсем те пуласçё. Колхозниксем çар ёçне вёренме лайăх çўреççё. Граждан вăрçи участникёсем Н. Тимофейёв, А. Никифăрăв тата ытти йулташсем те заньатисене активлăн çўреççё. Осоавиахим пуçламёш организацийё çар вёренёвё туса иртерме хатёрленет.

А. Киçеļов.

Пуйан пурнăç

(Новосибирск облăçёнчен килнё çыру)

Новосибирск облăçёнчи колхозсем кăçал калама сук вăлла тырпул пуçтарса илеççё. Кемерово районёнчи „Красный коммунар" колхоз пёрёмпех Чăваш республикёнчен килнё колхозниксенчен тăрăç. Колхозниксем тăрăшса ёçленине пуля, пирён колхоз района пёрремёш выранта тăрат, пур ёçсенё те вăхăтра, тирпейлё туса пырат. Акă кăçал виççёмёш Пилёкçуллăх Займне пёр кун хушшинче çырăнса пётернё, займ илмесёр пёр колхозник те йулман. Тепёр кунне займ уçинне 2 пин тенкё йăлтах тўлесе татрăмăр. Çавăн пекех налог, страховкă уçисене те сентябрён 1-мёш тёлне сручченех парса татнă.

Ăçăлхи вăхăтра колхоз хёрсех çўртри вырат. Волкавпа Илендейёв машинисем кунне 4-шар гектар выраççё (нормă 3 гектар). Нормă тăрăх кунне 500 кёлте сыхмала пулсан, М. Данилăвă, М. Илендейёва, М. Николайёвă колхозницăсем йаланах 1000—1200-шер кёлте сыхаççё. Тыра выракансем хушшинче агитацилё-массалă ёçе лайăх организациленё. Колхозницăсем пёр чăрмавсăр ёçлеччёр тесе ача йăçли уçнă. Уйрах столовай ёçлет.

Кăçал пирён колхозра шкул уçса пачёç. Учительсем те чăваш семех. Колхозăн ёне ферми пур, унта 42 ёне. Государственна сёт-çу тăратас плана августăн 1-мёшёнчех тултарнă, унсăр пуçне 25 центнёр йрекён сутнă. Колхозниксем пурнăçё çулсеренех лайăхланса пырат. Кăçал кашни ёçкунё тăрăх 10 килограм тёттăрă тата 1 тенкё укçа валеççе параççё.

Ив. Тарасăв.

Йăвăлти 11-мёшёнче интересех тухса кайса лаша çухаланă. Тёсё сарă, ă çулта, кёçре. Вăл лаша йăтнине пёлекенсене Вăрнар районёнчи Алгазинăри „Чăваш Коммунё" колхоз правленине пёлтерме ыйтатăр

Л. Н. Толстой йачёпе вечёр

Вырăссен аслă писательё Л. Н. Толстой çуралнă 110 çул тултарнă йăтпа сентябрён 11-мёшёнче Шупашкарти педрабфакра литература вечёрё пулса иртрё. Вечёрта вырăс чёлхипе вёренекен А. Б. Васильёва йулташ Лев Николайёвич Толстой пурнăçёпе ёçёсем çинчен доклад туса панё.

И. Нарышкин.

Канаш—Шупашкар чукунçул тăрăх таварсем турттарма тытăннă

Канаш—Шупашкар чукунçул тăрăх таварсем турттарасси вăйланасах пырат. Сентябрён 1-мёшёнчен пуçласа Шупашкар станцинчен 197,5 тонна таварсем турттарса кайнă. Нумай пулмасть икё вакунпа Чăвашторг вальăн тимёр кроватсем тата шпалерсем илсе килнё.

10 кун хыçланă Шупашкар станци таварсем турттарнинчен 6800 тёнкё тупăш илнё.

Витринăсем

Ураваш (Вăрнар район) пысăк йал. Халё кунта почтă уйрăмё уçăлнă. Почтă уйрăмё уçăлнăранпа йалта икё çёрте витринăсем туса лартнă. Витринăсем çинче кашни кун çёнёрен хаçатсем кăларса сакаççё. Вёсем иккёмёш те çынсем нумай çўрекен вырăнсенче.

Кунта йаланах колхозниксем пухăнса тăрса „Правда" тата „Чăваш Коммунё" хаçатсене пёрлешсе вуласа тăнине курма пулат.

Цыпленкăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

ССРС Халăх Комиссарёсен Советёнчён Экономсовечё кăçалхи сентябрён 1-мёшёнче йышăннă ёç 211—11 номёрлё решени тăрăх, денатурăтăн вакăн сутмали хакё пёр декалитрăн 60 тенкё пулат.

Шупашкарти ерех савăвё.

2—2

Шупашкарти Водопйанăв йачёпе тăракан тир сăпан комбинатне

КАССИР КИРЛЁ

ДИРЕКЦИ.

ЧАССР Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариатне ЙАЛАНЛАХ ЁÇЛЕМЕ

бухгалтёр-ревизор

вакансине кирлё

Кăрл Маркс ураммёнчи 6-мёш номёрлё çуртра ыйтса пёлмеле.

ÇЁМЁРЛЕРИ КОМБИНАТА

ВАСКАВЛĂ КИРЛЁ

платникем, камёнщиксем, арматурщиксем, штукатурсем, столярсем тата йăвăç каскалакан станочникем.

Пурăнма хватер параççё.

Комбинатăн кадрсен сектăрёнчен ыйтса пёлмеле.

2—2

Чăваш АСС Республикёнчи пульницăсене, амбулаторисене, консультацисене, диспансёрсене, санаторисене тата ытти сиплекен учрежденисене

ПЁЛСЕ ТĂМА

Чăваштаптекоуправленин сиплекен учрежденисенчен вёсене 1939 çула кирлё пулăмăш медицинăл, лаборатори оборудованийсем тата реактивсем тăратас майпа заявкăсем пулма тытăннă, çавăнпа та мёнпур сиплекен учрежденисенчен аптекоуправлени адрёсёне (г. Чебоксары, Аптечния 13) çав предметсем вальăн кăтартнă формăпа заявкăсем ОТВЕТЛĂ ЗАЙАВКĂСЕМ йăма мăтатăр.

1939 çул вальăн ответлă заявкă

Сиплекен учрежденин йачё

Адрёс

Йёркелё № №	Предметсен йачёсем	Тёплё хисеп	Мён чухнё тăрат	Асăрхаттарни
1	Медицинăл оборудованийё.			
2	Лабораторин оборудованийё.			
3	Реактивсем.			

Заявкăн пётём хисепё ..... тенкёлёх

Сиплекен учреждени (йăвё)

Çак заявкăра кăтартнă предметсене Чăваштаптекоуправлени сказадёнчен вăхăтра тўлесе илме обязательстви парат тата 1939 çулта медицинăл тата лабораторин оборудованисем тăратма ыйтса пынă ответлă заявкăн уйрăлса тăман пайёнче пулса тăракан çав обязательствăна пурнăçа кёртеçипе çыхăнăлă ответлăха хăй çине илет.

Сиплекен учреждени руководительё (алă пуçни).

Бухгалтёр (алă пуçни)

Заявкăна çырнă кун .....

Ку заявкăна Чăваштаптекоуправленине кăçалхи сентябрён 25-мёшёнче кайа мар кăтартнă формăпа тёлёкён çырса тăратмала.

Аптекоуправлени çакна асăрхаттарат: кăтартнă формăпа мар, обязательствăта памасăр тăратнă заявкăсене йăха туямă йышăнмаççё.

Заявкăсене кăтартнă срукра тăратман сиплекен учрежденисене 1939 çулта медицинăл тата лабораторин оборудованисене план тăрăх парса тăрас çёрле кёртеççё.

Чăваштаптекоуправлени.

3—1

„Чăваш Коммунё" çырăнма вăхăт: кăçалхи çичё уйăх 3 т. 80 пус, 6 уйăх 7 т. 50 п., 3 уйăх 3 т. 80 п., 1 уйăх 1 т. 30 п. Подписка ыйтăнăçем, письмоносецсем йышăнаççё.

Уполномоченный Чувашиздата № 482 Гор. Чебоксары, типография № 1 Чуваполиграфтреста, заказ № 711, ф. А. 5АХ84 п. л.

Чăвашла тёрёс çырасси çинчен

Пирён чёлхере пайан кунченех икё тёслё çырăнăвăн (кăмёлле тенё, çапла і сырăнăн) сăмахсем пур. Урăх чёлхерен кёнё сăмахсене мёнле çырасси çинчен калаçса татăлнине пёр вăхăтрах пирён çав икё тёслё çырăнăсăн сăмахсене тёрёс çырасси пирки те сўтсе-явăса çирёп правила йышăнас пулат.

1. Йлар ачё: йывăр—йăвăр, йăхăрăт, вăхăрат, йытă-йăтă, йăйăхйăйăх, çывăр-çăвăр, кёртет-кўртет сăмахсене. Пёр вăхăтра пуртене пёрех вёсене ы тата ў спаллалисёпе çырма тёрăшăнă палăртăчё, унтан пур сăмахсене те ă тата ё спаллали йеннеле çавăрма хăтланса пăхрёç. Раснах 1923—26 çулсенче çав пухăн палăрчё. Халё акă икё енёлё те, кам мёнле çырас тенё çавăн çырăнсё. Учебниксем çинче пёр тёрлё („йăтă" тесе) çырса пынёç, ача-пачасене киле вуламăш кёнекесем çинче тепёр майлă („ытă") çырнине тёл пулăтăн.

Ку сăмахсене е ана çырассăн та, капла çырассăн та пур ёçре, икё ме вăхăт ёнтё. Çёнё орфографи правилисенче кўн пирки халё чылайăх çирёп йёркене куçма пăлăртнине ирлас пулат çеç.

„ССР Сойузён кёске историйё" кёнекинче (чăвашла 1937 çулта пичетленнё 1-мёш изданире, 22 стр.) туртăртарни тесе çырни пур. Паллах, ку ун пек формăри глаголсене тёрёс çырас правилăна пăсни пулат. Йурлăттарнă, çёлеттернё, ёçлеттернё, ташлаттарнă т. ыт. çавăн пек сăмахсене икшер т саспаллине çырмала.

Пирён тата пур çёрте те сăмахсене тёрёс çырасскăн аваррых пулассăн туйăнат. Йанăравё те лайăхрах тата чылай районсенче ăна çавăн пек калаçса те. „Выртса сывăрах ачам" тесе калани „выртса çăвăр" тенинчен килёшўлёрех пек.

2 Çав майпалах йăвăш-йунăш-йумăш, кăна-куна, хăнăрат-хунăрат сăмахсем пирки калаçса татăлмала.

3. Каллех ёнёр-ёнир, ёсёр-ёсир тесе калаçкалакансем пурринне те асра тытмалах, икё тёрлё хăвармаç мар пулё.

4. Хăйăрăн хăйăрăн, иртерсе-иртерсе, туртăрăм т. ыт. çавнашкал сăмахсем пирки те сăмах татăлнă хыçран, икё ме вăхăт ёнтё. Çёнё орфографи правилисенче кўн пирки халё чылайăх çирёп йёркене куçма палăртнине ирлас пулат çеç.

„ССР Сойузён кёске историйё" кёнекинче (чăвашла 1937 çулта пичетленнё 1-мёш изданире, 22 стр.) туртăртарни тесе çырни пур. Паллах, ку ун пек формăри глаголсене тёрёс çырас правилăна пăсни пулат. Çак правилăна пăсни вăл йен сăмах çумне (сăмах тёпё пёр кёскелмесёрех) не вёçлев хушшинчен пулнă. Ай—айне, ум—умне, хёл—хёлле, Михаил—Маталла тенё пекех вăл.

Сложнăй сăмахсене пёрле, уйрăм ёе дефискăпа çырас шăйту та татăклах мар ха пирён. Хăшёсем мар тата пек сăмахсене, частицăсене йăланах уйрăм çырма сёнеççё. Анчах та терминсенче (туллимар, сывмар) вёсене пёрлех çыраççё. Çёнё правописанире çке частицăна ытти частицăсем пекех дефискă урлă (аван-çке) çырма хушнă пекех, кунта тёп принцип кăтартса пирас пулат. Ёнё иртнё статйăра асăннă: уляхурак, шывăнхи т. ыт. йăтсем пирки калани те çёнё правилăра тивёç вырăн йышăнмала. Хам ку мйтăва вёçне çитех татса парайманнине, чёлхе тёлёнше ёçлекенсем, преподавательсем статйăсем çырса, кăтартусем парассе шанатăп.

Н. Васанкка.